**Урок теми:**

**Кашни чĕрĕ чун, кашни çын хӳтлĕхсĕр – вăйсăр (Петĕр Эйзинăн «Йăмрапа хурăн» сăвви тăрăх).**

**Урок тĕсĕ**: Шухăшлав урокĕ.

**Урок тĕллевĕсем:**

**Пĕлӳ тĕллевĕ:** 1.Петĕр Эйзинăн «Йăмрапа хурăн» сăввине вуласа тишкересси.

2. Ачасене пурнăç çинчен, çынпа çын хутшăнăвĕ çинчен, çут çанталăк пулăмĕсем çинчен тарăннăн шухăшлама вĕрентесси.

**Сапăрлăх (воспитани) тĕллевĕ:**

1. Ачасен калаçу чĕлхине аталантарасси.
2. Харпăр хăйĕн шухăшне уççăн калама хăнăхтарасси.
3. Çĕр çинчи ырăпа усала уйăрма, ватă çынсене хисеплеме, çыннăн хуйхи-суйхине ăнланма, çынна пулăшма, хӳтĕлеме вĕрентесси.

**Илемлĕх (эстетика) тĕллевĕ:**

1. Çут çанталăкри чуна тыткăнлакан илеме курма, йывăç-курăка упрама вĕрентесси.
2. Вуланă калава хак пама вĕрентесси.

***Урок мелĕсемпе меслечĕсем:*** учитель сăмахĕ; урок темипе тĕллевне пĕлтерни; учителĕн илемлĕ вулавĕ; словарь ĕçĕ; сăвва сасăпа илемлĕ вулаттарни; текстри япала ячĕсемпе ĕçлесе темăна тупма вĕрентни; текстри паллă ячĕсем темăна уçса пама пулăшнине кăтартасси; йăмрапа хурăн сăнарĕсене тишкерсе кластер туни; йăмрапа хурăн сăнарĕсене схема-таблицăпа характеристика парасси; синквейнпа пĕтĕмлетесси.

Пуплеве аталантарас хăнăхусем:

- таблицăпа усă курса хайлав тĕсне, темине, тĕп шухăшне, сюжет йĕрне тупма пулăшасси;
- çыхăнуллă каласа пама вĕрентесси;
- пĕтĕмлетӳ тума вĕрентесси.

**Курăмлăх хатĕрĕсем:**

вĕренӳ кĕнеки, Петĕр Эйзин портречĕ, «Юманпа çăлкуç» текст, Василий Поймаковăн «Лисук» калавĕ, мультимедилле проектор, компьютер, 3 слайд (П.Эйзинăн «Йăмрапа хурăн» сăвви патне тунă кластер, йăмрапа хурăн сăнарĕсене пĕтĕмлетмелли синквэйнсем).

**Урок эпиграфĕ:**

Çынпа çын пурăнать.

Ваттисен сăмахĕ.

**Урок юхăмĕ:**

1. **«Кĕркунне» темăпа калаçса илесси.**

Кĕрхи илем… Мĕншĕн ылтăн-ши вăл кĕркунне? Йывăç çулçисем сарă, хĕрлĕ, хăмăр, симĕс, кĕрен… Çулçă тăкăнать…

Мĕнле йывăççем ÿсеççĕ-ха пирĕн тăрăхра? Мĕнле йывăççем кĕр илемне кÿреççĕ?

***Юман, çăка, вĕрене, хурăн, хурама, йăмра, çĕмĕрт, çирĕк, шĕшкĕ, палан, пилеш, ăвăс, йĕлме, катăркас, чăрăш, хыр, каврăç, хăва…***

***Мĕншĕн йывăççем пĕр пек ÿсеймеççĕ?*** (Лайăх условисем çукран.)

Йывăççем те чĕрĕ: çураласçĕ, çын пекех сывлаççĕ, ĕçлеççĕ, канаççĕ, пăшăлтатаççĕ те шавлаççĕ, вилеççĕ… Анчах та вĕсем калаçаймаççĕ.

Йывăççене çынпа танлаштарма пулать-и? Халăх сăмахлăхĕнче çапла калаççĕ: юман – атте, çăка – анне, хурăн – хĕр, шĕшкĕ – шăллăм, йăмра – йăмăк.

**2.Урок тĕллевĕ çинчен каласси.**

Паян эпир Петĕр Эйзинăн «Йăмрапа хурăн» сăввине вуласа тишкерĕпĕр, çут çанталăк экологийĕпе чун экологийĕ çинчен калаçăпăр, харпăр хăй чĕлхине çĕнĕ сăмахсемпе пуянлатăпăр, сăнарлăха туйма хăнăхăпăр, çынна ырă тăвас туйăмсене малалла аталантарăпăр.

**3. Сăвва вуласа тишкересси.**

1) Вĕрентекен илемлĕ вуланине итлесси.

2) **Словарь ĕçĕ: Йăрăс**-тÿрĕ.

**Алхасса**-ашкăнса, иртĕнсе.

**Вистенĕ-** хăпартнă, сÿнĕ.

**Курпун**-çурăм шăмми мăкăрăлса тухни.

**Экологи**-çут çанталăк тасалăхĕ.

3) Ыйту-хурав.

- Сăвăра мĕнле сăнарсене тĕл пултăр?
- Автор йăмрапа хурăна еплерех сăнласа панă-ши?

| **Йăмра** | **Хурăн** |
|---|---|
| Ватă | çап-çамрăк |
| Лутра | йăрăс |
| Курпун | илĕртÿллĕ |
| | сар пике |
| **Йăмрана** | **Хурăна** |
| ялан кÿрентернĕ | пăхса савăннă |
| тавралăх илемне ярать тенĕ | тавралăх илемне кÿрет тенĕ |
| Каснă | хăварнă |

-Йăмрана камсем кÿрентернĕ? Ăна мĕншĕн каснă?

-Йăмрана каснă хыççăн хурăнпа мĕн пулнă?

(«Инкек-синкек тиеннĕ», «хуппине вистенĕ», «шывне юхтарнă», «илемĕ пĕтнĕ», «пуçне уснă», «хурлăхлăн ларнă»).

-Ватă йăмрапа çамрăк хурăна пурнăçра камсемпе танлаштарма пулать-ши? (*-Ватă тата çамрăк çынпа.)*

– Хурăн йăмра хÿттинче ним шиксĕр, ним шухăшсăр ларать. Хÿтлĕх пĕтет те – хурăн та пĕтет.

– Çамрăк çын та ватă çын çумĕнче хÿтлĕхре пурăнать. Ватти вилсессĕн çамрăкки пĕр-пĕччен тăрса юлать. Ăна вĕрентекен те, йăпатакан та,

пулăшакан та, пăхакан та, хавхалантаракан та çук. Çын ирĕксĕрех мĕскĕне тухать: пуç та, алă та усăнать.

Апла ан пултăр тесен ватăсене, хамăра хӳтлĕхре пăхса усракан чи çывăх та ырă çынсене, пирĕн хисеплемелле, упрамалла.

Йăмра ватă, илемсĕр пулсан та – шанчăклă, ун хӳттинче тепĕр йывăçа ӳсме питĕ меллĕ. Ăна кӳрентереççĕ пулсан та – вăл çавах чăтса-тӳссе ларать.

Ватă çынсем те – ачисемшĕн, мăнукĕсемшĕн пурăнаççĕ. Вĕсем пурнăçра хăйсене тăлăххăн ан туйччăр, инкек-синкек мĕнне ан пĕлччĕр, ытлă-çитлĕ пурнăçпа пурăнччăр теççĕ.

4) Сăввăн темипе тĕп шухăшне палăртасси.

Халь сăвăри япала ячĕсене тупса, темăна палăртăпăр.

| | | |
|---|---|---|
| Йăмра | Йăмра | Хупă |
| Хурăн | Хурăн | Шыв |
| Йăмра | Алă | Илем |
| Хурăн | Тавралăх | Йывăç |
| Пике | Илем | Пуç |
| Ача-пăча | Йăмра | Йăмра |
| Иртен-çӳрен | Инкек-синкек | Хӳтлĕх |
| Хурăн | Хурăн | Вăхăт |

?-йăмра ?- инкек-синкек

?-хурăн ?-хӳтлĕх

?-илем

Текстра хăш сăмах нумайрах тĕл пулать? (йăмра-5, хурăн-5, илем-2).

Учитель пĕтĕмлетĕвĕ: Сăмах ытларах йăмрапа хурăн çинчен пырать.

Çакăнтан тема тухса тăрать. Йăмрапа пĕрлех хурăн та йышлă тĕл пулать.

Апла пулсан, хайлаври тĕп сăнарсем- йăмрапа хурăн.

Тăтăш тĕл пулакан сăмахсенчен ĕç-пуç кунта илемпе, инкек-синкекпе, хӳтлĕхпе çыхăнни курăнать.

Йăмрапа хурăн сăнарĕсем урлă темăна палăртатпăр– çут çанталăк тасалăхĕпе чун тасалăхĕ.

Текстри паллă ячĕсемпе ĕçлесе йăмрапа хурăн сăнарĕсене палăртатпăр.

Паллă ячĕсем

| | |
|---|---|
| Ват | Илĕртӳллĕ |
| Çап-çамрăк | Сар |
| Лутра | Хурлăхлăн |
| Курпун(лă) | Ватă |
| Йăрăс | Ыр |

Паллă ячĕсем темăна уçса пама пулăшаççĕ. Сăнарсен характерне уçса параççĕ, пурнăç çине мĕнле пăхнине кăтартаççĕ. Халь глаголсене пăхса тухăпăр.

| | |
|---|---|
| Пурӑнатчӗҫ | Касрӗҫ |
| Ас илтеретчӗ | Тиенчӗ |
| Алхасса | Вистенӗ |
| Пӑхса | Юхтарнӑ |
| Савӑннӑ | Пӗтрӗ |
| Кӳрентеретчӗҫ | Ларать |
| Ҫӗклеме | Усса |
| Хӑяймастчӗ | Аса илсе |
| Ярать тесе | |

Сӑвӑри глаголсем ӗҫ-пуҫа мӗнле сӑнлаççӗ? ( Глаголсем хайлаврa пулса иртекен ӗҫсен йӗркине кӑтартаççӗ).

Пӗтӗмлетӳ: Хайлаврa пулса иртекен ӗҫсен йӗркине сюжет теççӗ. Сюжет тӗп шухӑша тупма пулӑшать.

Тӗп шухӑш: Кашни йывӑç хӑй вырӑнӗнче ӳсет. Ӑна касса-чӗрме, вӑхӑтсӑр пӗтерме кирлӗ мар. Илемлӗ-и вӑл, илемсӗр – вӑл ҫавах ешерет, усӑ сывлӑш парать. Ӑна касса-чӗрме, вӑхӑтсӑр пӗтерме кирлӗ мар. Ватӑ ҫынна та кӳрентерме, унӑн кӑмӑлне хуҫма, ӑна хисепрен кӑларма юрамасть. Ват ҫын – тӑват ҫын теççӗ.

Халӗ вара хайлава синквэйн туса хамӑр ӑнланнӑ пек пӗтӗмлетӗпӗр.

| Ҫаврасем | Япала ячӗ | Паллӑ ячӗ | Глагол |
|---|---|---|---|
| 1 ҫавра | йӑмрапа | ват | пурӑнатчӗҫ |
| | хурӑн | ҫап-ҫамрӑк | |
| 2 ҫавра | йӑмри | лутра | ас илтеретчӗ |
| | | курпун(лӑ) | |
| | хурӑнӗ | йӑрӑс | |
| | | илӗртӳллӗ | |
| | | сар | |
| 3 ҫавра | ача-пӑча | | алхасса |
| | иртен-ҫӳрен | | пӑхса савӑннӑ |
| | йӑмрана | | кӳрентеретчӗҫ |
| 4 ҫавра | хурӑн | | ҫӗклеме |
| | ал | | хӑяймастчӗ |
| 5 ҫавра | тавралӑх | | ярать тесе |
| | илемне | | касрӗҫ |
| | йӑмрана | | |
| 6 ҫавра | инкек-синкек | | тиенчӗ |
| | хурӑн | | |
| 7 ҫавра | хуппине | | вистенӗ |
| | шывне | | юхтарнӑ |
| 8 ҫавра | илемӗ | | пӗтрӗ |
| | йывӑҫӑн | | |
| 9 ҫавра | пуҫне | хурлӑхлӑн | ларать |
| | йӑмра | ватӑ | усса |
| | хӳтлӗхӗнчи | ыр | |
| | вӑхӑта | | аса илсе |

-Хăш сăмах темиçе хутчен те тĕл пулчĕ?
(Йăмра. Ăна пĕрремĕш çырса хурăпăр).

СИНКВЭЙН

| | |
|---|---|
| Япала ячĕ | йăмра |
| 2 паллă ячĕ | ватă, лутра |
| 3 глагол | кӳрентернĕ,тавралăх илемне ярать тенĕ,каснă |
| Предложени | Ват йăмрана ялан кӳрентернĕ |
| Синоним (метафора) | хӳтлĕх |

СИНКВЭЙН

| | |
|---|---|
| Япала ячĕ | хурăн |
| 2 паллă ячĕ | йăрăс, илĕртӳллĕ |
| 3 глагол | пăхса савăннă, илем кӳрет тенĕ, хăварнă |
| Предложени | Хурăна пăхса савăнма хăварнă |
| Синоним (метафора) | илем |

- Ачасем, мĕнле туйăмсем çуратать-ши çак сăвă?

( - Ватă йăмрана хĕрхенес килет. Ăна касмалла пулман. Вăл ешерсе ларнă чух унпа киленнĕ, ватăлсан вара – хаклама пĕлмен.

- Хурăна та шеллес килет. Хӳтлĕх пĕтнĕ хыççăн вăл та вăхăтсăр илемсĕрленет.

- Çынсем чунсăр пулнăшăн тарăхас килет. Йăмрапа хурăн пĕр-пĕриншĕн тĕрек, шанчăк, хӳтлĕх пулнине вĕсем ăнланаймаççĕ, пĕрне пĕтерсен тепри те пĕтме пултарнине туйса илеймеççĕ.)

- Автор мĕншĕн сăвва «Хурăнпа йăмра» тесе ят паман-ши?

( - Йăмра – ватă, хурăн – çамрăк.

- Ватта хисепе хуни, сума суни.)

4. **Литература терминĕсемпе ĕçлени.**

-Автор тĕп шухăша аллегори мелĕпе уçса панă.

**Аллегори** – çыннăн пурнăçне, шухăш-кăмăлне, сăн-сăпатне пĕр-пĕр сăнар е паллă урлă систерсе калани. «Йăмрапа хурăн» – тарăн шухăшлă сăвă. Автор йывăç сăнарĕсем урлă çынсен пурнăçне, вĕсен хуйхи-суйхине, вĕсен шăпине кăтартса парать.

**Верлибр** – француз чĕлхинчен кĕнĕ сăмах – ирĕклĕ, виçесĕр, рифмăсăр сăвă.

5. **Сăввăн тĕп шухăшне уçса паракан ваттисен сăмахĕсене çыртарни.**

- Çынпа çын юнашар чух çара уйра та ăшă.
- Çынна çын яланах кирлĕ.
- Тăлăх йывăça тăвăл хуçать.
- Тăлăххăн пурăнни – кусçуль тăкни.
- Ашшĕ-амăш хӳттинче ывăл-хĕрне çăмăл.

**6.Урок темипе çыхăннă хайлавсемпе паллаштарасси.**

Çакăн евĕр чуна хускатакан хайлавсем вырăс литературинче те тĕл пулатпăр. Акă илер-ха Н.Соколова çырнă «Рябинка» хайлава:

Выросла рябинка при дороге.

Она выросла случайно, незаконно, пристроилась на обочине, у высокого дощатого забора.И вот поднялась, как подросток, угловатая и милая, мотая на ветру кудрявой головой.

Наступил август. Тонкие ветки рябины согнулись под тяжестью пышных богатых гроздьев, ярко и празднично окрашенных. Деревце запылало, как костер на юру. Хороша была рябинка и в погожий день, когда каждая ягода дрожала в капле воды и ветки застенчиво протягивали свои добрые длинные листья, склеенные, как пальцы после долгого рукопожатья.

Шла мимо девочка. Увидела рябинку, поахала.

-Возьму-ка я одну веточку.Одна веточка- это ведь так мало, ничего с деревцем не случится.

Ехал на машине усатый дядька.

-Ух ты… Прямо картинка… Шикарно!

Он остановил машину, вылез из-за руля. Ветки рябины так и затрещали под его сильной рукой.

-Вот какая стоит богатая, небось не обеднеет, если я прихвачу для жинки две-три ветки.

Под вечер шли туристы…И они по одной ветке сорвали.

Шел в сумерках влюбленный.На рябинке горела одна -единственная кисть, которую никто, видимо, не смог достать.Влюбленный был высокого роста и сумел дотянуться…

На другой день приехал хозяйственник.

-Что это еще за уродец?- строго спросил он, наткнувшись на рябинку.

-Убрать. Срубить. А то весь вид портит.

И рябинки не стало.

-Автор çак йĕркесене çырса парса пире мĕн каласшăн-ши?

-Çыннăн тĕрĕс мар утăмне тăвиччен çав утăм хыççăн мĕн пулса тухассине тĕплĕн шутламалла.

-Йывăçăн та ӳсес, пурăнас, çут çанталăк ырлăхне курас килет, анчах чунсăр çынсене пула унăн та шăпи хурăнăн шăпи евĕрлех пулса тухнă.

-Çак хайлавра, ачасем, эсир мĕнле илемлĕх мелĕсем тĕл пултăр?

- «Как подросток», «как костер на юру» - танлаштарусем.

-«Мотая на ветру кудрявой головой» сăмах майлашăвĕ - метафора.

- «Деревце запылало». Кунта та вăрттăн танлаштару куратпăр.

- «Ветки застенчиво протягивали свои добрые длинные листья». Кунта эпир туратсем çын вăтаннă евĕр вăтаннине, çын аллине тăснă евĕр çулçисене тăснине кăтартнине куратпăр. Ку вăл - сăпатлантару.

-«Добрые листья» сăмах майлашăвĕ те сăпатлантару пулать.

**Тепĕр тĕслĕх илер-ха.**

Темиçе çул каялла Америка ученăйĕсем кӳлĕ таврашĕнчи вăрăмтунасене йăлт пĕтернĕ. Вĕсем пĕтсен шаписем те пĕтнĕ. Кайран кӳлли те шăршланса-çĕрсе пĕтнĕ. Кайран çак кӳлле каялла вăрăмтунасене, шапасене килсе янă

та, кӳлĕ ĕлĕкхи пекех çуталнă, тасалнă. Ку тĕслĕх пире мĕн çинчен калать?(Çут çанталăкра пурте шайлашуллă пулмалла.)

Кусем – çут çанталăкри пулăмсем, сăнлăхсем. Çак сăнлăха чĕрĕ çынсемпе танлаштарар.

Василий Поймаковăн «Лисук» калавĕнче вара амăшĕпе хĕрĕ пĕр-пĕринсĕр пурăнайманнине кăтартса панă. Лисукăн амăшĕ вăхăтсăр çĕре кĕрет. Çитĕнсе çитмен хĕр ача пĕр-пĕччен тăрса юлать. Кашни кунах амăшĕн вил тăпри çине кайса нумайччен макăрса ларать. Юлашкинчен вара килне те таврăнмасть: вил тăпри çинчех ĕмĕрлĕхех куçне хупать.

Апла пулсан, ачасем, пирĕн пурнăçра мĕнле пулмалла-ши?

-Ваттисене хисеплемелле.

-Йывăрлăхпа кĕрешсе ăна çĕнтерме хăнăхмалла.

**7. Пĕтĕмлетни.**

Çапла, кашни чĕрĕ чунах хӳтлĕх кирлĕ. Пурте пĕр-пĕринпе тачă çыхăннă, пурне те тимлĕх уйăрмалла. Кашни çыннăн чунпа та, шухăшпа та ырă, илемлĕ пулмалла. Ахальтен мар Петĕр Эйзин: «Çĕр çинче этем нумай, çынни сахал»,-тет. Кам-ши вăл этем? Кам-ши вăл çын? Вĕсем хушшинче мĕнле уйрăмлăх-ши?

Çын пулас тесен ырă шухăшлă, ырă ĕçлĕ, ырă чунлă пулмалла. Эсир хăвăр умăра çын пулас тĕллеве лартасса тата çут çанталăкпа шайлашуллă çын пуласса эпĕ шанатăп.

**8. Ачасен пĕлĕвне, шухăшлавне, ĕçне, хастарлăхне палăртасси.**

**9. Киле ĕç парасси.** «Йăмрапа хурăн» сăвăри илемлĕх мелĕсене тупмалла.

**Илемлĕх мелĕсем**

**Эпитет** – йăрăс, илĕртӳллĕ хурăн; ватă йăмра; çап-çамрăк хурăн.

**Танлаштару** – сар пикене ас илтеретчĕ вăл.

**Инверси** – Ларать вăл халь пуçне усса ытла та хурлăхлăн,
Ватă йăмра хӳтлĕхĕнчи ыр вăхăта аса илсе.

**Символ –** йăмра – ватă çын; хурăн – çамрăк çын.

**Ассонанс** – ача-пăча, иртен-çӳрен е алхасса, е ахальтен…

**Антитеза** – ват йăмрапа çап-çамрăк хурăн; йăмри – лутра, курпун, хурăнĕ – йăрăс, илĕртӳллĕ; савăннă – кӳрентернĕ.

**Олицетворени** – Ват йăмрапа çап-çамрăк хурăн пурнатчĕç юнашар.
Ларать вăл халь пуçне усса ытла та хурлăхлăн,
Ватă йăмра хӳтлĕхĕнчи ыр вăхăта аса илсе.

**Метоними** – Хурăн çине ал çĕклеме никам та хăяймастчĕ.